БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашской Республики

Республика шайӗнче ирттерекен «Чӑвашла уяв янратӑр!» сценарисен конкурсӗ

«Шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенче ирттерекен конкурссем» номинаци

Мероприятие ирттерекенӗ Антонова Венера Михайловна,
Муркаш районӗнчи Шурчари
пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулти
шкул ҫулне ҫитмен ачасен «Юмах» ушкӑн воспитателӗ

Шупашкар, 2018

**Аслă вăрманта.**

(Ача садĕнчи шкул çулне çитмен ачасемпе ирттермелли уяв сценарийĕ)

Тĕллевсем:
**Аталану:** ачасен хусканăвĕсене, хăвăртлăхне, тимлĕхне, çаврăнăçулăхне, хастарлăхпа пултарулăх енĕсене аталантарасси.
**Сапăрлăх:** ачасене тăван тавралăха сăнама, юратма, унăн илмне упрама вĕрентесси (йывăç-курăка хуçмалла мар, чĕр чунсемпе кайăксене пулăшмалла),шыв-шур вăхăтĕнче асăрхануллă пулмалли пирки асăрхаттарасси.
**Пĕлӳ:** сăмахри сасăсене уççăн калама, пĕр-пĕрне итлеме хăнăхтарасси;
ачасен пуплевне тата шухăшлавне аталантарассипе малалла ĕçлесси;
кайăксене, чĕр чунсене, йывăçсене пĕлтерекен сăмахсене аса илсе çирĕплетесси, вĕсене ачасен пуплевне кĕртесси;
**Ĕç хатĕрĕсем**: упа, мулкач, пакша костюмĕсем, пысăклатса ӳкернĕ тĕрлĕ кайăксен тата йывăçсен ӳкерчĕкĕсем, юрă (- минусовка) ямалли хатĕр.

**Уяв юхăмĕ**

*Ертсе пыракан*. Ырă кун пултăр, ачасем! Ырă кун пултăр, хаклă хăнасем!

*Ачасем*. Салам пултăр пурне те, вăй патăр сире те!

*Ертсе пыракан*. Ачасем, паян Анюк сире Вăрман патшалăхне илсе каясшăн. Çак патшалăхра мĕнле йывăçсем ӳснине, мĕнле кайăксемпе чĕр чунсем пурăннине пĕлĕпĕр. Анчах та унта лекме çăмăл мар, Анюкăн ĕçĕсене малтан пурнăçламалла. Ачасем, эсир тĕрлĕ ĕçсем тума хатĕр-и?

*Ачасем*. Хатĕр!

*Ертсе пыракан*. Чи малтан çакăн пек тупмалли юмахсен тупсăмне каламалла.
(Ачасем икĕ ушкăна пайланаççĕ)

1-мĕш ушкăн валли: Тӳн-тӳн, тӳн карчăк, тӳн карчăкăн пин шăрпăк (Чĕрĕп)
Шик-шик шикленет, шĕшкĕ кутне кукленет. (Мулкач)

2-мĕш ушкăн валли: Ту çине хăпарать туясăр, ту çинчен анать урасăр. (Çĕлен)
Асанне куçĕнчен куççулĕ юхать.(Çăлкуç)

*Ертсе пыракан*. Маттур, ачасем. Халĕ вара Анюк сăмахне итлĕпĕр.
(П. Эйзинăн «Упа керменĕ» юмахĕнчен илнĕ сыпăкне вулать)

*Анюк.*
Пирĕн аслă вăрманта,
Юмахри пек вырăнта,
Утмăл тĕслĕ курăк пур,
Çитмĕл тĕслĕ йывăç пур.

Пирĕн патри вăрмана
Пырас пулсан хăнана
Куçу кайĕ алчăрса,
Пуçу кайĕ çаврăнса.

Пирĕн чаплă вăрманта
Виç çĕр тĕрлĕ чĕр чун пур.
Ĕненмесен эс кунта
Ятарласа килсе кур.

*Ертсе пыракан*. Кайса курар-ха вăрмана, йывăçсен, кайăксен, чĕр чунсен пурнăçĕпе те кăсăкланар.Унччен вара йывăç ячĕсене аса илĕпĕр. Юрать-и?

*Ачасем:* Юрать!

(Черетпе Юман, Çăка, Хурăн, Ăвăс, Чăрăш, Хыр рольне вылякан ачасем тухаççĕ, аллисенче йывăç ўкернĕ картинăсене йăтнă, Анюк ачасенчен йывăç ячĕсене йĕркипе чăвашла – вырăсла ыйтать, пĕлмесен хăй калать.)

*Анюк:* Ку мĕнле йывăç? Вырăсла мĕнле пулать?

*Ачасен хуравĕ*: Юман-дуб.

(Кайран ачасем Педер Хузангайăн «Вăрман юрлать» сăвăсен ярăмĕнчи сыпăксене вулаççĕ)

*1-мĕш ача*
Юман
Эп – Юман, Юман, Юман,
Эп – пуриншĕн утаман!
Кам мана сума суман-тăр?
Юмахра эп – Юман паттăр,
Юрăра – Юман атте;
Сывă- сывă ывăлсен
Ячĕсем те пулнă тет
Юманкка мĕн ĕлĕкрен.
Пуринчен эп çирĕппи,
Хускалми хапха юпи.

*2-мĕш ача*
Çăка
Çăкана та тиркемеççĕ,
Юратаççĕ ĕлĕкрен;
Юрăра «анне» тееççĕ,
Ахăртнех тивĕçлĕрен.
Ман чечекĕм пархатарлă,
Манăн пылăм пит паха:
Шăннă чух ĕçсессĕн тарлăн,
Сиплĕ пулĕ сывлăха.
Эп хуралтă та витетĕп,
Эп пулатăп мунчала:
Эп чăпта, кантра, вĕрен эп,
Эп кĕретĕп мунчана.

*3-мĕш ача*
Хурăн
Эп – çĕр шыв илемĕ Хурăн,
Таçтанах мана эс курăн.

Кăтра пуç та, шур ура та
Пăхтарать çынна ялан.
Ватăлсан кăвакаратăп,
Пĕрĕнет ўт-тирĕм ман.
Манăн вуттăм – чи хакли,
Хăрăма та çын упрать:
Кĕнеке çаптармалли
Хура сăрлăх вăл юрать.

*4-мĕш ача*
Ăвăс
Ăвăс теççĕ, ăвăс теççĕ,
Ăвăс япăх йывăç теççĕ:
Уярта кăна пырать
Çумăрта кăвакарать;
Çĕршĕнет вăл пурара та,
Тикĕс мар вăл урайра та,
Çуннă чух та шартлатать,
Хĕрўне сахал парать.

*5-мĕш ача*
Чăрăш
Эпĕ – Чăрăш, эпĕ  Чăрăш,
Пĕлмесен пĕлмешкĕн тăрăш.
Эп яштак, парка, илемлĕ,
Кам мана пăхса киленмĕ?

*6-мĕш ача*
Хыр
Манăн ятăм пулĕ Хыр,
Чăрăшпа эп пĕртăван.
Ман пата та эсĕ пыр,
Эп те начар мар, аван

*Ертсе пыракан*. Ачасем, пирĕн çут çанталăкпа туслă, килĕшўллĕ пурăнмалла. Чăваш енре 586,8 пин гектар вăрман пур, вăл- пирĕн пуянлăх. Çĕр çинче  йывăçсем сывлăша тасатаççĕ. Пирĕн вĕсене упрамалла. Вăрман пулмасан чĕр чунĕсем те пурăнаймаççĕ. Йывăççене хуçма, ватма юрамасть. Пĕр йывăç касрăн пулсан ун вырăнне вуннă лартмалла теççĕ халăхра.
*Анюк*. Эпир хирĕç мар. Юррине те вĕрентĕмĕр, пĕрле юрлăпăр.
(Ачасем икĕ рете тăрса тухаççĕ те пурте пĕрле юрă юрлаççĕ.)

Лартар симĕс йывăçсем (юрă)

Кĕвви Г.Лебедевăн,
Сăвви В. Давыдов –Анатрин

Атьăр тухăр, ачасем,
Пурте аслă урама.
Лартар çамрăк йывăçсем:
Хурăн, йăмра, хурама.

Пирĕн симĕс йывăççем
Ўсчĕр халĕ ташласа.
Вĕсем çинче кайăксем
Ларччăр юрă юрласа.

Пирĕн аслă урамсем
Капăрланĕç çулсерен.
Эпир уншăн ачасем
Тăрăшар-ха чĕререн.

*Анюк.* Мĕнле кăна йывăç ўсмест пуль пирĕн вăрманта! Вĕсен илемĕ чуна тыткăнлать. (Кайăк юрланă сасăсем илтĕнеççĕ) Кайăксен сассисене илтетĕп эпĕ.

*Ертсе пыракан*. Вăрман вăл кайăксăр пулмасть. Ак вĕсем те вĕççе килчĕç.

(Черетпе Карăш, Тăри, Шăпчăк, Куракпа Çерçи рольне вылякан ачасем тухаççĕ, аллисенче кайăксем ўкернĕ картинăсене йатнă, Анюк кайăксен ячĕсене йĕркипе чăвашла – вырăсла ыйтать, пĕлмесен хăй калать.)

*7-мĕш ача*
Карăш
Эп, карăш, халăхра каларăш,
Чысра тытатăп ятăма,
Вун икĕ куккукпа пĕр харăс
Эп пултаратăп авăтма (Ю. Сементер)

*Ертсе пыракан*. Карăш-хăраххăн пурăнакан кайăк. Вăл ытларах çĕр çинче, çўллĕ курăксем хушшинче пытанса пурăнать. Çўллĕ те инçе вĕçме урисем чăрмантараççĕ.

*8-мĕш ача*
Тăри
Ачасем, туятăр-и,
Мĕншĕн манăн ят тăри?
Ма тесен хир çийĕнче,
Тырă пусси тăрринче,
Шăрантарап юррăма,
Йыхăратăп ир тăма.
Шăтакан калчасене
Сиктеретĕп сăпкине,
Сас парап хĕвел енче-
Пурăнатăп çĕр çинче.(Ю. Сементер)

*Ертсе пыракан.*Тăрирен пултаруллăрах юрăçа тупаймăн та. Вăл çўл тўпене çĕкленсе илемлĕ юрăсем шăрантарать.

*Анюк.* Ачасем, илтетĕр-и, темле шăв –шав хăлхана çурать. (Кайăксем чакăлтатни илтĕнет)

(Куракпа Çерçи тухаççĕ, Ю.Сементерĕн «Куракпа Çерçи» сăввине выляççĕ)
*9,10-мĕш ачасем*

Курак калать:

- Кăр-рак,-тет,-
Кĕркуннепе каяп,- тет,-
Çуркуннепе килеп,- тет.
Çерçи калать:
- Чим-чим,-тет,-
Тен, эс урăх каймăн,-тет,-
Чăваш енрех лайăх, -тет.

*11-мĕш ача*
Шăпчăк
Шăпчăк пырса ларсассăн
Çăка ярать юрласа
Шăпчăк пырса ларсассăн
Юман ярать юрласа.
Шăпчăк пырса ларсассăн вăрман ярать юрласа.
Атя, Анюк, вăрмана,
Çăка çумне тăрăпăр,
Атя, Çинук, вăрмана,
Шăпчăкпала юрлăпăр.

*Ертсе пыракан.* Вĕçен кайăксем ял, вăрман хуçалăхĕсене сиен кӳрекен чĕр чунсен йышне йĕркелесе тăраççĕ, çум курăк вăррисене пуçтарса пысăк усă кӳреççĕ. Вĕсемсĕр вара тĕрлĕ чир те сарăлса кайма пултарать.

*Анюк.* Кайăк сассисене илтсе чĕр чунсем те кунталла пуçтарăнаççĕ пулмалла, ачасем, калăр-ха, мĕнле те пулин сасă илтетĕр-и?
(Упа мĕкĕрни илтĕнет)
*Ачасем.* Упа сасси илтĕнет!

*12-мĕш ача*
Пирĕн аслă вăрманта
Урлă ура упа пур.
Упи лайăх, усал мар,
Пырсан – пылпа хăналать. (П.Эйзин)

(Упа тумне тăхăннă ача тухать те тĕрлĕ хусканусем тăвать, ачасем юрлаççĕ)

Упа- утаман (юрă, Н. Казаков кĕвви, Б. Чиндыков сăвви)

Вăрманта пырать аран
Ватă утаман.
Те ури ун ыратать,
Те юри тăвать?
Хăлхине уснă,
Ассăн сывлать.
Ăçта çул тытнă,
Ма хурланать?
*Хушса юрламалли:*
Утаман, утаман,
Эсĕ хытă ан кулян!
Утаман, утаман,
Пирĕнтен эс ан пытан.

Кил кунта выляма,
Юрлама та ташлама!
Кил кунта выляма,
Юрлама та ташлама!
Кил часрах
Выляма!
Пирĕнпе савăнма!

*Анюк.*
Пирĕн чаплă вăрманта
Мамăк хӳре пакша пур.
Пакши ĕçчен, кахал мар,
Пырсан – мăйăр тыттарать. (П.Эйзин)

(Ачасен ушкăнĕ пакша тумĕпе савăнăçлă ташă ташлать)
*13-мĕш ача*

Пирĕн симĕс вăрманта
Вăрăм хăлха мулкач пур.
Хăй пачах та хăрамасть,
Пырсан –çырла хыптарать.

(Ачасен ушкăнĕ «Ыйхăлать куян çури» юрă юрлаççĕ. Н. Казаков кĕвви, Б. Чиндыков сăвви)

Ыйхăлать куян çури,
Уснă вăрăм хăлхине.
Ыратмасть текех ури,
Вылятмасть тек хӳрине.
*Хушса юрламалли:*
- Хав-хав-хав!...Хав-хав-хав!..
Çывăр, ан хăра.
- Хав-хав-хав!...Хав-хав-хав!..
Эпĕ хуралта.
Тĕлĕреççĕ ав ĕшеннĕ
Пĕчĕкçĕ пуканесем.
Хăмăр Мишка та тĕреннĕ
Аякри пĕр кĕтесе.

*Анюк.* Ачасем, вăрманпа çыхăннă мĕн чухлĕ сăвă, юрă, ташă пĕлетĕр эсир, апла пулсан чăн та вăрман тусĕсем ĕнтĕ эсир. Ку мана питĕ савăнтарать. Кĕтесри Мишка, ав, итлесе çывăрсах кайнă.

*Ертсе пыракан.* Анюк, питĕ тĕрĕс асăрханă эсĕ. Часах эсир пурте канма каятăр. Юлашкинчен çакна каласа хăварасшăш. Вăрман вăл пирĕн пуянлăх, ун пек пуянни çук теççĕ. Ăна пирĕн яланах упрамалла, çĕнетмелле.
Ытарайми çепĕç чăваш юррисемпе сăввисем, вăййи-кулли вара кашнин чун хавалне, кăмăл-туйăмне çĕклетĕр, çут тĕнчере пĕр- пĕринпе туслă, килĕштерсе пурăнма хавхалантартăр.

Литература

1.*Игнатьев Н.Г., Яковлев В.А.* Чӑваш ен чӗр чунӗсем. Вӗҫен кайӑксем.- Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1997.-374с.
2.*Дмитриев П.Е.* Дворец медведя.-Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2008,.-47с.:ил.
3.*Сементер Ю.С.* Килӗр, килӗр, кайӑксем:сӑвӑсем.- Шупашкар:Чӑваш кӗнеке издательстви, 2012.-47с.
4.*Васильев Н.В.* животные- наши друзья.- Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2005,.-15с.:ил.
5.*Патмар И.А.* Тупмалли юмахсем.- Канаш:Патмар, 1993.-147с.
6.*Хузанкай П.П.* Ҫырнисен пуххи. 2 том. Сӑвӑсем, ярӑмсем.- Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 2002.-558с.
7. Мехел ҫитсен.Ачасем валли ҫырнӑ юрӑсем.-Шупашкар: СВ-Пресс, 2015.-132с.
8.Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ:Хрестомати:Пуҫламӑш классем валли/Г.Ф. Трофимовпа Р.Н. Петрова пухса хатӗрленӗ.- Шупашкар:Чӑваш кӗнеке издательстви, 1993.-304с.
9. Чӑваш халӑх пултарулӑхӗ. Тупмалли юмахсем.- Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 2015. -446с.